**Семинар занятийĕнчен**

# Муркаш район сучĕ – ыттисемшĕн тĕслĕх



Кăçалхи апрелĕн 20-мĕшĕнче Муркаш район сучĕн бази çинче республикăри районсенчи судсен судйисен кустри семинар занятийĕ иртрĕ. Улатăр, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Хĕрлĕ Чутай, Етĕрне, Элĕк районĕсен сучĕсен председателĕсем, судйисем, мировой судйисем Муркаша килсе çитрĕç. Семинар занятине ЧР Аслă сучĕн председателĕ Н.П. Порфирьев, Чăваш Республикинчи Суд департаменчĕн управленийĕн пуçлăхĕ В.П. Петров, Аслă суд председателĕн çумĕ В.В. Бельцова, Аслă суд председателĕн çумĕн ĕçĕсене туса пыраканĕ А.Ю. Кошкин ирттерчĕç. Семинар занятине çавăн пекех район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов та хутшăнчĕ, семинара пухăннисене саламларĕ.

Занятире кулленхи ĕçре тĕл пулакан уйрăмах проблемăллă ыйтусене сӳтсе яврĕç. Суд тĕрĕслĕхĕн ĕçĕнче вĕсене пĕлни уйрăмах кирлĕ.

ЧР Аслă сучĕн председателĕ Н.П. Порфирьев çавна палăртрĕ. Семинар занятине ирттермелли вырăна ăнсăртран суйласа илмен. Муркаш район сучĕ ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăрать, унпа танлашма тăрăшмалла. Çакăнта Муркаш район сучĕн председателĕн Э.Л. Тарасован тӳпи пысăк. Ăна çак должноçа çирĕплетнĕрен вара суд ĕçне йĕркелесе пырасси, суд тĕрĕслĕхĕ лайăх еннелле палăрмаллах улшăннă.

РФ Правительстви 2006 çулхи сентябрĕн 21-мĕшĕнче йышăннă «Раççейре 2007–2011 çулсенче суд системине аталантарасси» Федераллă тĕллевлĕ программа» 583 № постановленипе килĕшӳллĕн Программăн тĕп тĕллевĕ суд тĕрĕслĕхне, граждансемпе организацисен прависемпе саккунлă интересĕсене суд хӳтĕлессин пахалăх шайне ӳстерессипулса тăрать. Ку ыйтупа ЧР Суд департаменчĕн управленийĕн пуçлăхĕ В.П. Петров сăмах каларĕ. Кунпа пĕрлех вăл çак тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн судсенчи пĕтĕмĕшле юрисдикцин ĕç вырăнĕсем 75 пин, арбитраж сучĕсенче 14 пин пулмаллине палăртрĕ. Документсен çаврăнăшне электронлă майпа йĕркелени судьясемпе суд аппарачĕсенче вăй хуракансен ĕç тухăçлăхне ӳстерме май парĕ. Пĕтĕмĕшле юрисдикци сучĕсен 2200 веб-сайтне тата арбитраж сучĕсен 13 веб-сайтне йĕркелени Интернет сетĕнче суд ĕçĕ-хĕлĕпе çыхăннă сведенисене вырнаçтарма май парĕ.

Мировой судьясемпе район сучĕсенче пăхса тухмалли ĕçсене çĕнĕрен палăртĕç. Арбитраж сучĕсенче кассаци тата надзор айăплавне туса ирттерме юраман ĕçсен категорийĕсене палăртĕç, ытти ĕçсен категорийĕсем тĕлĕшпе пĕрремĕш инстанцири суд йышăнăвне малтан аппеляци туса ирттермесĕр кассаци йĕркипе пăхса тухма май пулмĕ. Çакă вăл пĕтĕмпех пăхса тухмалли ĕçсен калăпăшне чакарма, судсен ĕçне лайăхлатма май парĕ.

Тавлашусене судсăрах татса памаллин йĕрки судсене пысăк нагрузкăран хăтăлма, суд акчĕсен пахалăхне ӳстерме пулăшĕ. Пăхса тухакан ĕç пирки итлесси пуçланиччен судья ятарлă мар пур ыйтнисемпе пĕлтернисене те обязательнăй йĕркепе пĕлтерме тивĕç. Ку вăл йышăнакан решенисен объективлăхĕпе пăхăнманлăхне тивĕçтерĕ, суд ĕçĕнчи коррупци условийĕсене пĕтерĕ.

Ĕçсене пăхса тухнă чухне мăшăрĕсем, тăванĕсем, судья хăти-тăхлачи адвокат пулма пултараймаççĕ. Ку та суд ĕçĕнчи коррупцие пĕтерессипе çыхăннă. Суд ларăвĕнче обязательнăй йĕркепе аудиоçырав ирттерĕç. Çакă процессуаллă нормăсене пăхăнма, процеса хутшăнакансене сăпайлăрах пулма хистет. Апла пулсан суд ларăвĕсен протоколĕсем тĕлĕшпе те çăхавсем сахалрах пулĕç.

Пур район сучĕсенче те приемнăйсем йĕркелени граждансен суд тĕрĕслĕхне тивĕçтерме май парĕ, судсенче черетсем кĕскелĕç, ĕç кунĕнче кирек хăш вăхăтра та заявлени пама тата информаци илме май пулĕ. Кунпа пĕрлех судра ĕç пăхса тухиччен судьян енсемпе калаçма май пулманни те суд ĕçĕнчи коррупцие пĕтермелли условисенчен пĕри пулса тăрать.

Судьясем хăйсен тупăшĕсем, пурлăхĕ тата пурлăх обязательствисем пирки декларараци тăратма тивĕç. Çапла вара право тĕрĕслĕх органĕсене шанасси ӳсĕ. Суд çурчĕсене сыхлассипе уйрăм мерăсем йышăнма пăхнă. Суд акчĕсене пурнăçласси 52 процентран 80 процента çити ӳсет.

Юлашкинчен çавна каласшăн. Тĕллевлĕ программăпа пăхнă мероприятисене пурнăçа кĕртни суд тĕрĕслĕхĕн пахалăх шайне тата çӳллĕрех пусăма çĕклеме, граждансемпе организацисен прависемпе саккунлă интересĕсене суд хӳтĕлессине вăйлатма май парĕ. Апла пулсан ку вăл право патшалăхĕн çулĕпе малалла пысăк утăм тунине пĕлтерет.

**В. ЗАХАРОВ, район сучĕн судйин пулăшаканĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: семинар вăхăтĕнче.**

**Çур аки килти хушма хуçалăхра та**

# Мĕн хыççăн мĕн акмалла?

**Алăкран çу уйăхĕ шаккать. Ял çыннин пахчаран куç каймасть. Мĕн акăпăр кăçал, мĕн лартăпăр, хăш культура еплерех тухăç парĕ? Килти хушма хуçалăха тытса пыракан кашни çынна хумхантаракан ыйтусем. Вĕсем çине уçăмлăх тупас тĕллевпе эпир районти ӳсен-тăрана сыхлас енĕпе ĕçлекен агрономпа Алексей Семенович СЕМЕНОВПА çыхăнтăмăр. Специалист хуравĕ кашниншĕнех вырăнлă пуласси пирки пĕртте иккĕленӳ çук.**

Рынок тапхăрĕ килти хушма хуçалăхра та çĕнĕлĕхсене алла илме ыйтать. Кунта вăрлăх пахалăхĕ, уншăн ĕçлесси, ӳсен-тăран сăтăрçисемпе тата çум курăкĕпе вăхăтра кĕрешесси мала тухать.

Килти хушма хуçалăхра продукци илессине тивĕçлĕ шайра тытас тесен пахчари агротехникăна пăхăнмалла. Акă çĕр улми анин вырăнне 3 çулта пĕрре улăштармалла. Çапла тусан тата çĕр улми пуссине выльăх кăшманĕ, хĕрлĕ кăшман, кишĕр, пĕр çул ӳсекен тата нумай çул ӳсекен курăксем акса ылмаштарсан аван тухăç упранса юлать. Çĕр улми ани çине купăста лартсан тата ун хыççăн тислĕк нумай хывса сухаласан, "иккĕмĕш çăкăр" ăнçа пулать.

Йăрансем çинче кишĕр хыççăн помидор лайăх ӳснине манмалла мар.

Хăяр вырăнне сухан тата ыхра лартсан аван. Ыхра тенĕрен, çак культура пур пахча çимĕçпе те килĕшӳллĕ пулнине палăртмалла. Çакă та паллă, ыхра пур йăрансене те чирчĕртен тасатать.

Купăста пуçĕ тытăннă вăхăтра вăл çĕресрен "планриз" препаратпа 20-шер кун урлă 2-3 хутчен пĕрĕхсен хăрушлăх иртет.

Чиесемпе хурлăхансене çак вăхăтра "БИ-58" химилле препаратпа сапмалла. Çакă вĕсене пур сăтăрçăсенчен те сыхланма пулăшать. Çӳлерех асăннă химилле препаратсене республикăри ӳсен-тăрансене хӳтĕлекен станци урлă туянма пулать. Кунта пĕрлешӳллĕ хуçалăхсене пырса тивекен тепĕр çĕнĕлĕх çинче те чарănса тăрас килет. Хуçалăхсенче çур аки ĕçĕсем пуçланчĕç ĕнтĕ. Çак вăхăтра минераллă удобрени сахал е пачах çук хуçалăхсенче азота сывлăшран пухакан биологиллĕ "ризоагрин", "славобактерин" препаратсене туянассине, вăрлăха вĕсемпе хутăштарса акассине йĕркелемелле. Ку ыйтупа интереслене кенсене район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн тĕп агрономĕпе 2-15-31 телефонпа çыхăнма ыйтатпăр.

**Кадрсем**

# Çамрăксене ял хуçалăхĕ кĕтет

**Раççей Президенчĕ "АПК аталантарасси" приоритетлă наци проекчĕ çул панăранпа ял хуçалăхне çĕнĕ аталану варкăшĕ пырса кĕчĕ. ЧР Ял хуçалăх министерстви яллă вырăнсенчи çамрăксене Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине вĕренме кĕме тан условисем туса пама вĕрентӳ учрежденийĕпе килĕшӳ тунă. Çак çăмăллăхпа паянхи куна пирĕн районти 106 çамрăк усă курнă та ĕнтĕ. Вĕсем паян академири тĕрлĕ факультетсенче вĕренеççĕ.**

**Черетлĕ вĕренӳ çулĕ вĕçленсе пынă май район администрацийĕ ял хуçалăх академийĕпе килĕшӳ туса академи ректорачĕпе майăн 10-мĕшĕнче кăçал 11 класс вĕренсе пĕтерекенсемпе район администрацийĕн ларусен залĕнче тĕл пулу ирттерет. Тĕп ыйту – вĕренме кĕмелли условисем.**

**Н. СМИРНОВА, ял хуçалăх пайĕн ертсе пыракан специалисчĕ.**

**Пушар хуралĕнче ырă йĕр хăварнисем**

# "Ĕç пĕтмест та-ха…"

Ырă лаша хыççăн суха касси те тӳрĕ юлнăран, хресчен паха янавар çине питĕ шаннă, хăйĕн пурнăçне унпа тĕпренех çыхăнтарса пынă, капарăшĕсенче те ăна тĕп вырăна тăратнă.

Районти пушар хуралĕн аталанăвĕнче ырă йĕр хăварнисем пĕр çын мар. Анчах паян эпир Муркаш енре ĕçлевлĕ пушар хуралĕ йĕркелессипе пысăк вăй хунă, пирĕнтен вăхăтсăр уйрăлса кайнă Иван Антонович Степанов çинчен асăнмасăр иртейместпĕр. Пушар хуралĕнче паян ĕçлекенсемпе районта тĕрлĕ шайри экономикăна аталантарассипе вăй хуракан аслăрах ăрури специалистсемпе рядовой ĕçченсем вăл малашлăха пăхса çирĕп ыйтнине паян та асра тытаççĕ.

…Ăшă та хăтлă хваттерте Иван Антонович мăшăрĕпе Вера Германовнапа калаçса ларатпăр. Уяв умĕн пулсан та калаçу çăмăл мартан Вера Германовнан куçĕсем çине-çинех шывланаççĕ.

– Кĕске ĕмĕрĕнче пурнăçа юратакан Ваня районшăн пысăк ĕçсем туса хăварма пултарни пире йывăрлăхра тĕкĕ пулса тăчĕ те. 37 çул... Вăл ырă сунса вăхăтра пулăшнă çынсем унран юлнă вицĕ ывăлăма та тĕрĕс-тĕкел пурнăç çулĕ çине кăларма пулăшрĕç. Аслă ывăлăмсем – Алешăпа Женя – ашшĕ çулне суйласа илчĕç те паян Ямалпа Ненецк автономи округĕнчи Надымпа Салехард хулисенче пушар хуралĕнче тăраççĕ, – ывăлĕсем мăшăрĕн çулне суйланипе кăмăллă пулнине палăртса калаçать Вера Германовна. Сăмах май, асли Алексей Ивановăри пушар училищи хыççăн Салехард хулинче Ямалпа Ненецк автономи округĕн пушар хурал управленийĕнче дознанипе административлă практика пайĕн пуçлăхĕн çумĕ пулса ĕçлет, Женя вара Çĕрпӳри ял хуçалăх техникумне пĕтерсен Раççей çарĕнче чикĕ хуралĕнче служба тăнă хыççăн Надымри пушар чаçĕнче аслă пушарнăй пулса вăй хурать. Иртнĕ çул вăл пушарта çулăм тыткăнĕнчен 3 ачана кăларнăшăн "Вилекенсене çăлнăшăн" медале тивĕçнĕ. Кĕçĕнни Андрей паян район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕн ертсе пыракан специалисчĕ.

Улми йывăççинчен аякка ӳкмест, теççĕ те, çимĕççине кура йывăççи пирки калама пулать.



Иван Антонович Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Çĕнĕ Матькăкра 5 ачаллă хресчен çемйинче 1955 çулта çуралнă. Вăхăт çитсен çарта службăра тăнă. Çартан таврăнсан вăл пушар хуралĕнче чунне парса ĕçлени йăлтах Вера Германовна куçĕ умĕнче.

– Ваня çартан таврăнсан икĕ кунран паллашрăмăр. Çартан таврăннă çамрăка республикăри пушар хурал управленийĕн пуçлăхĕ В.Смирнов анчахрах Шупашкарта уçăлнă пушар техникин выставка-музейне ертсе пыма чĕнсен, мăшăрăм килĕшрĕ. Унтанах вăл Воронежри пушарпа техника училищине 11 уйăхлăх курссене вĕренме кайрĕ. 1978 çулхи октябрьте вĕренĕве пĕтерсен мăшăрăма Муркаша пушар хурал инспекторĕнче ĕçлеме ячĕç. Пĕччен кăна пулнăран унăн районти пушар хуралне аталантарассипе самай тăрăшма тиврĕ. Районĕ пысăк, ĕçĕ çăмăл маррине кура вăл пĕрремĕш кунранах инспекторсен йышне ӳстерессипе тимлеме пуçларĕ. Кĕçех вăл районта ертсе пынă патшалăх пушар надзорĕн инспекцийĕнче çамрăк инспекторсем Виталий Смирнов, Георгий Пыркин, Николай Романов, Алексей Жирнов ĕçлеме пуçларĕç, – мăшăрĕн ĕçĕпе кăмăллине пытармасть ĕç ветеранĕ, Муркаш лицейĕнчи воспитательница В.Степанова. – "Ĕç пĕтмест та-ха", тетчĕ киле вăхăтра таврăнайман чухне. Вăл районти пушар хуралне малалла аталантарассишĕн, вăл çулсенче шыв хыççăн кăмпа шăтнă пек çĕкленекен çуртсемпе производство объекчĕсене ĕçе йышăнма тата вĕсенче пушар хăрушсăрлăх правилисене пăхăнассине вăхăтра тăрĕслесе тăрассишĕн ĕçе пуçĕпех путнине ăнланаттăм. Ĕçне питĕ юратса тăвакансĕр киле таврăнсан та час-часах пушар хăрушсăрлăхĕпе улшăннă правилăсене вулатчĕ, çĕнĕлĕхсемпе паллашатчĕ.

Ĕçне чунĕпе парăннă Иван Антонович ШĔМ службин отличникĕ, ВДПО отличникĕ паллăсене, медальсене тивĕçнĕ, иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче çулленех "Профессии тĕлĕшĕнчен чи лайăххи" ята илме пултарнă.

– Пушарта çынсем вилнине питĕ йывăра илетчĕ. Акă пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайиччен юлашки пушартан таврăнчĕ те çулăмра икĕ ача пурнăçĕ татăлни тата вĕсен кĕлеткисене хăй аллипе кăларнине макăрса пĕлтерчĕ, – аса илчĕ В.Степанова сыв пуллашнă май.

Мĕнех, паян районти пушар хуралĕнче тăракансен камран тĕслĕх илмелли çук мар.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: И.Степанов 80-мĕш çулсен пуçламăшĕнче.**

**Апрелĕн 30-мĕшĕ – Пушар хурал ĕçченĕсен кунĕ**

## Йĕркелĕх пĕрле ĕçленинчен килет

Паян пушар хуралĕнче кунĕн-çĕрĕн вăй хуракансем çĕршер çул ĕлĕкрех йĕркеленнĕ ырă йăласене самантлăха та манăçа кăлармасăр малалла аталантарса, пуянлатса пыраççĕ."Пушар хуралĕ çинчен" федераллă саккунпа килĕшӳллĕн федераллă ĕç тăвакан органсем, РФ субъекчĕсен ĕç тăвакан органĕсем, вырăнсенчи самоуправлени органĕсем, организацисем, должноçри çынсемпе уйрăм граждансем пушар хăрушсăрлăхĕн требованийĕсене пăхăннине тĕрĕслесе-йĕркелесе тăратпăр, пушар хăрушсăрлăхне пăснă ĕçсене тĕпчетпĕр, официаллă статистика учетне туса пыратпăр, строительство лаптăкĕсене суйласа илессине тата строительство ĕçĕсене вĕçленĕ объекта ĕçе кĕртессине аларан вĕçертместпĕр, объектсене пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерме ĕç тăвакан влаçăн федераллă органĕсемпе, РФ субъекчĕсен ĕç тăвакан органĕсемпе, вырăнсенчи ĕç тăвакан органсемпе, обществăлла организацисемпе тата пĕрлешӳсемпе тачă çыхăнса ĕçлетпĕр, пушар хăрушсăрлăхĕпе граждансемпе организацисен ыйтăвĕсене пăхса тухатпăр. Куратăр ĕнтĕ, ку ĕç пĕччен пурнăçламалли çул-йĕр мар. Кунта эпир пĕрле пулсан, пĕр тĕллевпе малашлăха шанса ĕçлесен çеç хамăр пурлăха çулăма парассинчен сыхласа хăварăпăр.

Районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕ ячĕпе Муркаш енче пушар хуралне çывăх тăракан пур çынна та Раççей пушар хуралĕ йĕркеленнĕренпе 358 çул çитнĕ ятпа саламлатăп!

**И. СМИРНОВ, районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн пуçлăхĕ.**

## Пурнăçлайман задача çук

Раççейре ĕлĕк-авалтанпах çулăмпа кĕрешекенĕн ĕçне хакланă, хăйне хисепленĕ. Пушар хурал историйĕ кунта ĕçлекенсем кăтартнă паттăрлăхсене нумай пĕлет, кашнине асра тытать, çав тĕслĕхсем çинче пушарнăйсен çĕнĕ ăрăвне воспитани парать. Муркашри пушар хуралĕ те çакăнтан айккинче тăмасть. Паян 37-мĕш пушар чаçĕ Шупашкарти пушар службин 5-мĕш уйрăм отрячĕн йышне кĕрет. Штатра 25 çын. Вĕсем 4 караулпа çирĕплетнĕ графикпа куллен службăна тухаççĕ. Хăйсене шанса панă 6 пушар машинине кирек хăçан та рейса тухма юсавлă тытаççĕ. Службăна тухакан пушарнăйсем хăйсен ĕçĕ çине ответлăха туйса пăхнăранах пулăшу ыйтакансем патне тухакан машина ĕçлеме пултарайманни пулман.

Пушарпа çăлав службин авторитечĕ пурри çинчен кунта ĕçе килекенсем кĕске вăхăтлăх суйлав туманни те калать. Пушар чаçĕнче службăра тăракансем ирĕке кайнă вут-кăварпа кĕрешнипе пĕрлех культура тата спорт пурнăçне те манмаççĕ: тăтăшах тĕрлĕрен конкурссенче, спорт ăмăртăвĕсенче пулаççĕ. Тавах вĕсене тăрăшулăхĕшĕн. Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ĕçченĕсене, хăй вăхăтĕнче кунта ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă ветерансене, пушар чаçне çывăх тăракансене тата пулăшакансене, пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенчи ведомствăлла пушар хуралĕн ĕçченĕсене, штатра тăман пушар хуралĕн инспекторĕсене тата вĕсен çемйисене Раççей пушар хуралĕн кунĕпе саламлатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп!

**С. МИТРОФАНОВ, 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн пуçлăхĕ.**

**01 пĕлтерет, асăрхаттарать**

# Пушар сăлтавне тĕпчетпĕр

Ирĕке каякан вут-кăвар вăл самантлăх тимсĕрлĕхе тата пушар хăрушсăрлăх правилисене сĕмсĕррĕн пăснине кĕтсех тăрать. Çапла пулса тухнă та пулас ака уйăхĕн 25-мĕшĕнче ăратлă выльăх ĕрчетекен "Свобода" ял хуçалăх кооперативĕ-заводра.

13 сехет иртсен районти пушар чаçне асăннă хуçалăхăн çамрăк выльăхсене çулла тытмалли лагерьте пушар тухни пирки пĕлтерчĕç. Вăхăтра çитрĕмĕр пулин те, хăмасенчен çапса тунă сарай пĕтĕмпех кĕлленчĕ. Каламалла, лагерьте электричество çукки, кунта выльăхсем тытма пуçламанни пушар çын аллинчен тухнине кăтартать. Ачасем шăрпăкпа вылянă е иртсе каякан пирус тĕпĕ пăрахса хăварнă… Çак ыйту çине хурав парассипе халĕ тĕпчев ĕçĕсем пыраççĕ.

Районти пушар хăрушсăрлăхĕ пирки каласан, кăçалхи тулли мар виçĕ уйăхра Муркаш тăрăхĕнче 10 пушар пулчĕ. Вĕсенче 100-шер пин тенкĕлĕх пурлăх кĕлленнипе пĕрлех тăвата çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ: икĕ тĕслĕх Ярославка ял тăрăхĕнче, пĕршер Йӳçкасси ял тăрăхĕнче тата "Волжский эксклюзив" кану базинче. Куратпăр, кашни пушарах районта чрезвычайлă ларутăру çуратать. Çакă пушар хăрушсăрлăх правилисене çирĕп пăхăнмалли çинчен калать.

**А. ИЗОНОВ, районти патшалăх пушар надзор уйрăмĕн инспекторĕ.**